***Чӑваш халӑх поэчӗ Яков Ухсай ҫуралнӑранпа 85 ҫул ҫитнӗ тӗле***



***Сӑнӳкерчӗкре:** уявра — Яков Ухсайпа чӑваш халӑх артистки Елена Шорникова ташлаҫҫӗ.*

# ҪӖР ҪИНЧЕ ҪИРӖППӖН ТӐРАТЧӖ

Сакӑр вунӑ пилӗк ҫул нумай-и вӑл е сахал? Камшӑн мӗнле вӗт. Пӗрисем сахал, теприсем нумай тейӗҫ. Чӑнах та, пӗри ҫирӗм ҫул урлӑ каҫать те ҫӗре кӗрет. Ҫавах та хӑй ятне халӑх умӗнче ӗмӗрлӗхех хӑварать. Ку ятсене аван пӗлетпӗр эпир. Вӗсем — «Нарспи» авторӗ Константин Ивановпа ҫулӑмлӑ та янӑравлӑ саслӑ Ҫеҫпӗл Мишши. Ҫавах та пурте вӗсем пек пулаймӗҫ. Ун пек талантсем ҫӗршер ҫул иртнӗ хыҫҫӑн тин халӑх умне тӳпере ҫӗнӗ ҫӑлтӑр ҫуралнӑ евӗр яр уҫҫӑн йӑлтӑрса кайма пултараҫҫӗ.

Чӑваш халӑх поэчӗ, Максим Горький ячӗллӗ Патшалӑх премийӗн лауреачӗ Яков Ухсай ҫитмӗл пилӗк ҫула ҫитеймерӗ, вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗчӗ. Сӑвӑҫӑн вара пӳлми тулличчӗ. Пӗрре

ларса вуласа тухма майĕ çук калăплă произведенисем çырчĕ вăл. «Тутимĕр», «Кĕлпук мучи», «Ту урлă çул», «Акăшкӳль», «Çĕр», «Шуйттан чури» — каласа та пĕтерейменĕн. Мĕн чухлĕ сăвăсен кĕнеки тата Яков Ухсайăн?! Кашни сăвăлла романĕ, трагедийĕ чăваш халăхĕн историйĕ, пĕр-пĕр тапхăра уçăмлăн та витĕмлĕн, ĕненмелле сăнласа-кăтартса парать поэт.

Çитмĕл пилĕк çул тултарса ĕлкĕреймен сăвăç мĕн чухлĕ ĕлкĕрнĕ! Кăçалхи чӳк уйăхĕнче 85 çула çитетчĕ сăвăçăмăр. Пурăнмаллаччĕ-ха сăвăçăмăрăн. Унăн вăйĕ-халĕ те, çырас ĕмĕчĕ те, ăсталăхĕ те пурччĕ. Пурне те панăччĕ ăна Турă. Анчах та чир вăрттăн та шалтан кăшлама тытăннă иккен поэта. Хавшатрĕ çав чир пултаруллă та маттур çынна, вăл вара Яков Ухсая пирĕн йышран уйăрса кайрĕ, ĕмĕрлĕхех леш тĕнчене илсе кайрĕ.

Çырас кăмăлĕ пысăкчĕ халăх поэчĕн. Хăй пултарулăхĕ пирки пит калаçсах каймастчĕ Я. Ухсай. Çавах та екки ярсан ĕмĕт-шухăшне пытармастчĕ.

Халăх поэчĕ çырнисене Мускаври издательствăсенче нумай пичетлесе кăларчĕç: паллах, вырăсла куçарса. Ун чухнехи пек каласан, автономилле республикăсенчен поэтсем çырнисене икĕ томпа кăларнисем çукпа пĕрех. Мустай Каримпа Расул Гамзатова çеç асăнма пулать-тĕр. Акă епле пысăк поэт пулнă Яков Ухсай! Хăй пурăннă чухне сăвăça тиркекенсем те тупăнатчĕç. Вăл çырнине çиелтен, тĕпленсе лармасăр вуласа тухатчĕç те — пĕр-пĕр мелсĕртерех каланине тупсан, савăнсах тĕслĕхсем каласа çӳретчĕç. Автор мĕншĕн çапла калать — анализ тăвасшăн марччĕ. Анчах çыракансем хушшинче камăн кăлтăксем çук-ши? Хамăр çине çаврăнса пăхмастпăр: çын куçĕнчи хăлчăка шыратпăр, хамăр умри пĕренене курмастпăр.

Вырăсла куçарас тесен эпир сăвăсене е поэмăсене, калавпа романсене подстрочниксем тăватпăр. Мĕнле калас, авторăн кашни сăмахне вырăсла куçарса паратпăр: паллах, вырăсла



*Сăнӳкерчĕкре: çил-тăмана та пăхмасçĕ, писательсем тĕп тунă çĕре утаççĕ. (Сулахайран сылтăмалла): В. Давыдов-Анатри, К. Турхан, Хв. Уяр, Н. Дедушкин, В. Алакер, Я. Ухсай, Г. Ефимов, В. Ухли.*

ăнланмалла туса паратпăр. Вырăс тăлмачисем çав подстрочниксем тăрăх произведение хак параççĕ. Я. Ухсай пирки Юрий Олеша мĕнле мухтать?! Ку статьяна «Ялав» журналта пичетлесе кăлартăмăр, вырăсларан хамах чăвашла куçарса панăччĕ. Тата Николай Корнеевич Чуковский (К. Чуковский ывăлĕ) çапла каланине астăватăп: «Яков Ухсай Николай Грибачев мар ĕнтĕ, Сталинла преми илес тесе «Колхоз «Большевик» пек поэмăсем çырас çуках, Ухсай чăн-чăн поэт» тенĕччĕ Переделкинора тĕл пулса калаçнă чух (ашшĕ патне — К. Чуковский патне — килнĕччĕ пулас вăл, хăй Ленинградра пурăнатчĕ).

Чăн-чăн поэта хăвăрт асăрхаççĕ. Н. Чуковский хăй те Я. Ухсайăн произведенийĕсене вырăсла куçарнă. Мускавра туссем нумайччĕ Я. Ухсайăн: А. Твардовский, А. Фадеев, П. Железнов, В. Замятин, Б. Иринин, С. Сартаков, С. Михалков, Е. Исаев, В. Шкаев, В. Фирсов... — каласа та пĕтереймĕн. Поэт пултарулăхне пысăка хуратчĕç, хисеплетчĕç вĕсем.



*Сăнÿкерчĕкре: Ярославль поэчĕ Иван Смирновпа Яков Ухсай.*

Унтан çакна та асăнса хăварам. «Советская Чувашия» хаçатра Социализмлă Ĕç Геройĕ, Ленинла преми лауреачĕ Егор Исаев интервью пани пичетленсе тухрĕ. Унта Я. Ухсая пысăк хак панă май манăн ят-шыва та асăнать Е. Исаев. Я. Ухсайпа тĕл пулсан, мана ятлă-сумлă поэт çапла каларĕ: «Егор Исаев сана манпа юнашарах асăнать, «большой, интересный поэт Чувашии» тет. Апла пире вулаççĕ Мускавра, Якур шăллăм...» Хăш-пĕр чухне хавхалантарма пĕлетчĕ аслă поэтăмăр.

Астăвăмĕ çирĕпчĕ, анлăччĕ халăх поэчĕн. Авалхи грексен Гомерĕнчен пуçласа хăй вăхăтĕнчи поэт-писатель таран пĕлетчĕ. Унпа калаçса кайсан вĕçне-хĕрне тухаймăн çав... Пĕлетчĕ, пĕлетчĕ Яков Ухсай!

Акă, халăх поэчĕ çуралнăранпа 85 çул çитнĕ май тĕлпулусем, чаплă литература каçĕсем ирттерĕç. Анчах та Яков Ухсайсăр. Ухсайсăр-и вара? Поэт çырнисене вулатпăр эпир сцена çинчен, ун пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калаçăпăр. Апла-тăк, вăл çырса хăварнисем пирĕнпе пулсан, — сăвви-поэмисене Я. Ухсай çырнă вĕт! — поэт пирĕнпе чĕррĕн те вилĕмсĕррĕн калаçĕ. Унăн 100 çулне те, 150 çулне те уявлĕ хамăр чăваш халăхĕ! Я. Ухсай пек поэтсем вилмеççĕ — пурăнаççĕ те пурăнаççĕ. Тăван халăхĕпе çĕрĕ-шывĕ, унăн юратăвĕпе инкек-синкерĕ çинчен чун хăватне шеллемесĕр çыракан — ĕмĕр-ĕмĕр чĕрĕ. Чăваш çĕрĕ, улăхĕ-çаранĕ пирки хайланă очеркĕсене çеç аса илер.

Яков Ухсая яланах аслă пичче пек куратăп. Вăл ман умрах, хам чĕрĕ чух ун сăнарĕ куç шăрçи çинчех тăрĕ: сăвăç тÿпере ăмăрткайăк пек ярăнса та тикĕссĕн вĕçет, çĕр çинче кулленех çирĕппĕн пусса çÿрет.

Çапла пулнă та, пулать те.